Çивĕч ыйту

«Мана Муркаш яланах килĕшнĕ»

Пĕлӳ илнĕ çамрăк специалистсем яла таврăнманни паянхи кун çивĕч ыйту пулса тăрать. Аслă шкулсенчен тин çеç вĕренсе тухнă, ĕç опычĕ ниçта та пухма ĕлкĕреймен çамрăксем таса хуласенчех юласшăн. «Пылчăкĕ» вара ялсенче те юлманпа пĕрех. Пурнăçа çирĕппĕн кĕрсе пыракан патшалăх нацпроекчĕсем яла пур енлĕн аталанса пыма майсем туса параççĕ. Тӳрех каласа хăвармалла, ялта пурăнакан тата ĕçлекен çамрăк специалистсене те палăрмаллах пулăшу тивет. Темĕн тĕрлĕ программа ĕçлет халĕ. Акă «Пурăнмалли çурт-йĕр» тĕллевлĕ программа пурнăçа кĕрсе пынине те пурте пĕлетпĕр. Пĕр сăмахпа каласан, вĕренсе пĕтернĕ çамрăксене ял хапăлласах йышăнма хатĕр. Шел пулин те, кунашкаллисем пирĕн районта та çукрах иккен. Темшĕн хăйсем çуралса ӳснĕ тăван Муркаш Ене ĕçлеме таврăнасшăнах мар паян çамрăксем.

Илер-ха, сăмахран, вĕрентӳ сферине. Учительсен августри конференцийĕнче вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Л.И. Мочалов хăйĕн докладĕнче темиçе шкултах специалистсем çитменни пирки асăннăччĕ. Ку турремĕнех çамрăксем ялсене таврăнманнипе çыхăннă. Учитель профессине суйласа илнисем те çак ĕçпех ĕçлеменни вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Пĕрисем ĕç укçи пĕчĕккипе, теприсем вара пиллĕк çул вĕреннĕ хыççăн професси килĕшме пăрахнипе çыхăнтараççĕ хăйсен хуравĕсене.

Тĕллевлĕ майпа та кашни çулах вĕренме кĕреççĕ мар-и-ха шкул пĕтернисем? Вĕсен аслă шкулсенчен вĕренсе тухсан тăван районах ĕçлеме килмелле-çке. Е ку услови пиллĕк çул хушшинче манăça тухать?..

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центртан пĕлтернĕ тăрăх чăваш чĕлхи учителĕсем кунта сахал мар ĕç шыраса килеççĕ-мĕн. Анчах пурне те шкулсене вырнаçтарма, паллах, майĕ çук. Паянхи куна илсен кунта учета илнĕ 16-29 çулсенчи çамрăксем хушшинче сутуçăсем ытларах. Бухгалтерсемпе математиксем те пур вĕсен ретĕнче, хореографпа менеджер та... Районта вара рабочисем кирлĕ.

Ял хуçалăхĕнче çак ыйту уйрăмах çивĕч тăрать. Пурте пĕлетпĕр, хуçалăхсенче специалистсем çитмеççĕ. Ял хуçалăх пайĕнче пĕлтернĕ тăрăх юлашки çулсенче тĕллевлĕ майпа вĕренме каякансем те чаксах пыраççĕ. Кăçал ял хуçалăх академине вĕренме кĕме пурĕ те 10 çын кăна направлени кирлине пĕлтернĕ. Вĕсем хуçалăхсене таврăнасси вара питĕ иккĕлентерет. Малтанхи çулсене тишкерсен те ӳкерчĕк япăххи сисĕнет. Пĕлтĕр те, сăмахран, вĕренсе тухнă 16 çамрăкран хуçалăхсенче 2 специалист кăна ĕçлеме тытăннă. Ултăшĕ хăйсен специальноçĕсемпех ĕçлеççĕ, анчах та хуçалăхсенче мар. Ĕç укçи пĕчĕкки тата ĕç условийĕсем лайăх шайра пулманни каялла таврăнса ĕçлес кăмăла путарать тесе ăнлантараççĕ алла диплом илнĕ специалистсем.

Çав вăхăтрах нумай хуçалăхра тĕп специалистсем те, водитель-механизаторсем те, выльăх-чĕрлĕхпе ĕçлекенсем те çитмеççĕ. Кадрсем енĕпе илес пулсан «Ударник», «Герой», Суворов яч. хис. тата Ильич яч. хис. хуçалăхсенче çеç паянхи куна ку ыйтăва татса панă темелле. Унта специалистсем те ĕç укçине илсех тăраççĕ. Çамрăк специалистсене вара пур хуçалăхра та йышăнма хавас.

Медицина сферинче çак ыйту тавра лару-тăру вара пачах хирĕçле. «Вăтăр çулчченхи çамрăксем кунта нумайăн – 90 яхăн», – терĕç Муркашри тĕп больницăри кадрсемпе ĕçлекен пайра. Апла пулсан больницăн малашлăхĕ пысăк. Паянхи çамрăк специалистсем ĕç опычĕ пухнă пултаруллă медицина ĕçченĕсене курса вĕренсе пыни те кунта куç умĕнчех пулса пырать.

Сăн ӳкерчĕкре куракан Андрей Николаевич Ермолаев фельдшер Муркашри тĕп больницăн васкавлă пулăшу уйрăмĕнче вăй хурать. Алла диплом илнĕ хыççăн вăл çĕр-шыв умĕнчи тивĕçне те пурнăçлама ĕлкĕрнĕ – Раççей çарĕнче службăра тăнă. Унтан вара килĕштернĕ профессипе ĕçлес тесех Муркашри тĕп больницăна вырнаçнă. «Шупашкартах е урăх хулара юлас килмен-и?» – тесе ыйтсан, кĕске, анчах та тивĕçтерекен хурав илтме тӳр килчĕ. «Мана Муркаш та, хам суйласа илнĕ професси те яланах килĕшнĕ. Çуралса ӳснĕ вырăнтан каяс шухăш нихçан та пулман. Муркаш тăрăхĕнчи çынсене сыватас ĕçре манăн тӳпе те пултăр тесе шутласа», – терĕ çамрăк фельдшер.

Ытти профессисене тин çеç алла илнĕ специалистсем те çавăн пек хуравсем парсанччĕ...

Н. НИКОЛАЕВА.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Пирĕн пата çыраççĕ

«Ылтăн алăллă» çын

Тойкилтĕ ялĕнче пурăнакан Амвросий Егорович Егоров – таврара питĕ хисеплĕ çын. Вăл пĕрмаях ĕçре: «аллисем ылтăн» унăн.

Паянхи кун та, 75 çул тултарчĕ пулин те, Амвросий Егорович алă усса лармасть. Аста алăсем тунă кĕреплесене, çава аврисене, çунашкасене тата ытти тĕрлĕ нумай хатĕре халăх кăмăлласах йышăнать. Кама кăна савăнтармасть пуль вăл хăй ăсталанă япаласемпе. Вĕсемпе пурнăçра куллен усă кураççĕ çынсем. Çавăнпах Турай пасарĕнче те вăл кĕтнĕ сутуçă. Тавар туянакансем унпа яланах кăмăллă юлаççĕ.

Малтан вара Амвросий Егорович 17 çул хушши бригадирта ĕçленĕ. Халăха ăнланса ертсе пынă. Ял хапхисем те, пĕве пуçĕсем те вăл ĕçленĕ вăхăтра юсавлă пулнă. Çулсене, çурăлса кайнă çĕрсене пăхсах тăнă. Çавăнпах ял-йышăн хисепĕ кунран-кун ӳссех пынă ĕнтĕ.

Малалла та пурăнма тата ĕçлеме çак хисеплĕ çынна ырлăх-сывлăх сунас килет. Ёмĕрĕ вăрăм пултăр унăн.

М. НИКОЛАЕВА,
Тойкилтĕ библиотекин ертӳçи.

Тĕпел кукринче

Килтех сыр маватпăр

Сĕте вĕреме кĕрсен çулăм çинчен илетпĕр. Тепĕр 5-10 минутран кăштах сивĕннĕ сĕте тăпăрч яратпăр. Пăтраштаратпăр та вăйсăр çулăм çине лартатпăр. Вăхăтран вăхăта çунса ларасран ăна йывăç кашăкпа пăтратса тăмалла. Тăпăрч шывĕ тухсанах массăна марля сарнă дуршлага хуратпăр.

Тăпăрч çине çемçелнĕ услам çава, тăварпа тата содăпа лăканă çăмартана хушатпăр. Çатмара е кастрюлте çак массăна пăтраштарса тăрса çăраличчен вăйсăр çулăм çинче пĕçеретпĕр. Çăралнă массăна çу сĕрнĕ формăна хуратпăр та каçлăха холодильнике лартатпăр. Ирхи апата сыр хатĕр те. 1 литр сĕт çине 1 кг тăпăрч, 200 г услам çу, 1-2 çăмарта, 1 чей кашăкĕ тăвар, чей кашăкĕ сода кирлĕ.

«Мономах» салат

250 г кишĕре пĕçерсе теркăламалла. 0,5 стакан иçĕм çырлине вĕри шывра кăшт тытса илмелле. Пĕçернĕ 3 çăмарта турамалла. 3 шăл ыхра (пысăккисем мар) вĕтетмелле. 50 г сыра терка витĕр кăлармалла. Хатĕр продуктсене 0,5 стакан кăшт вĕтетнĕ грек маййăрĕ хушса пĕрле пăтратмалла. Кирлĕ пек тăвар калаттарса майонез хушмалла.

Врач канашĕ

Вар-хырăм чирĕсенчен сыхланмалла

Кĕркунне пахча çимĕçпе, улма-çырлапа пуян. Лавккасенче, пасарта та вĕсене сутакансем çак вăхăтра уйрăмах нумай. Илес текен çын тата çимĕçне те тутанса пăхсах илме тăрăшать. Сентябрь – арбуз тата дыня вăхăчĕ. Çак пылаклă та техĕмлĕскерсене кашниех юратса çиет.

Анчах çуман пахча çимĕçе тата улма-çырлана çини часах вар-хырăм чирĕсемпе, А вируслă гепатитпа, тĕрлĕрен гельминтоз чирĕсемпе аптăратма пултарни пирки часчасах манатпăр. Çуман укроп-петрушка тата апатланнă чух усă куракан ытти симĕс курăк пирки те çакнах каламалла. Çитменнине çак вăхăтри çанталăк условийĕсем те асăннă чирсен вирусĕсене пурăнма лайăх майсем туса параççĕ.

Чи анлă сарăлнă вар-хырăм чирĕ – дизентери. Ăна пуçарса яракан ĕçем – шигеллсем. Ытларах Зонне тата Флекснер шигеллĕсем вар-хырăма лекнипе пуçланнă чирсене сиплеме тивет. Зонне шигеллĕсем организма лексе чирлеттерсен аслисем медицина пулăшăвĕсĕр те ăна сиплесе ирттерсе яма пултараççĕ. Анчах та çак вирус питĕ «пурнăça юратаканскер». Вăл хăйма, тăпăрч, турăх тата ытти хăш-пĕр çимĕçре уйрăмах аван ĕрчет.

Флекснер вирусĕ вара, темиçе кăна лексен те, вар-хырăма вăйлă аптăратма пултарать. Ытларах чух шыв пăрăхĕсем кивелнĕ, пăрăхсенчи пусăм ялăх пулсан тата шыв парасси пĕр тикĕссĕн пулса пымасан çак шигеллсем организма лекес хăрушлăх тухса тăрать.

Вар-хырăм чирĕсене пуçарса яракан вируссем организма ан лекчĕр тесен алăсене супăньпе çăвассине çирĕп йĕркене кĕртмелле, уйрăмах апатланас умĕн, тула тухса кĕнĕ тата урамра пулнă хыççăн.

Çуман чĕрĕ пахча çимĕçе е улма-çырлана çини тăпра ăшăнче пур гельминт çăмартисене ертме пултарать. Сливăна, пан улмине кăшт шăлса тасатнă хыççăнах çиетпĕр. Тепĕр темиçе сехетрен вара вар-хырăм ыратни çак йăнăш пирки аса илтерет. Ирĕксĕрех эмел илме васкамалла пулать.

Гельминтозсенчен аскаридоз, энтеробиоз тата токсокароз чирĕсем кĕске вăхăтрах пуçланма пултараççĕ. Аскаридоз хăйĕн çинчен хăсас килнипе, аппетит япăхланнипе, вар-хырăм ыратнипе пĕлтерет. Уйрăмах ачасем çак чире йывăррăн чăтса ирттереççĕ. Çитменнине тата вĕсен сывлăхĕ хавшать. Ачасем япăхрах вĕренме, кансĕр сывăрма пуçлаççĕ. Ăс-тăн тата ӳт-пӳ аталанăвĕ те кирлĕ пек шайра пулса пымасть.

Çавăнпа та вар-хырăм чирĕсене çывăха ярас мар тесен пахча çимĕçе, улма-çырлана яланах çумалла. Час пăсăлакан çимĕçсене холодильникре тытмалла. Арбуз-па дыньăна та сĕтел çине касса хуриччен тĕплĕ çумалли пирки асрах тытмалла.

Г. СОКОЛОВА,
Муркашри тĕп больницăри врач-эпидемиолог.

Милици хроникинчен

Тӳлевсĕр сĕткен тутлах мар çав

Ярапайкассинче вырнаçнă райпо лавккине Ермак ялĕнчи пĕр арçын сĕткен ĕçес тесе çитнĕ. Сĕткенĕ пылаклăрах туйăнтăр тесе-ши, лавккана çитиччен вăл йӳçĕ шĕвекпе киленнĕ. Çапах та сентре çинчен укçасăр илнĕ сĕткене 1 литр ĕçсен те пылакки нимĕн те пулман: арçыннăн РФ Уголовнăй Кодексĕн 161-мĕш статйипе паллашма тивнĕ. Унта вара йӳçĕ пурнăç пирки çеç тĕплĕн çырса панă.

Ватă кинемее çапла «хисепленĕ»

Исетерккĕ ялĕнчи хĕрĕхрен иртнĕ арçын паянхи кун нумай çĕрте вырнаçтаракан пластик чӳрече вырăнне тата меллĕрех япала шыраса тупнă. Хăйĕн «патентланă» ĕçне вара 80 çулхи карчăк пурăнакан пӳртĕн кантăкĕсем çинче тĕрĕсленĕ. Тăватă кантăкне те сăрăпа сăрласа хунă. Ватă нумай курасран-пĕлесрен хăранă курăнать. Пĕлес çук. Çапла туса вăл хăйне валли тĕттĕм вырăн шырамасть-ши?

«Тирпей-илем» кĕртес тенĕ-ши?

Шупашкар «хăнисем» пĕр кун Мичурин яч. хис. агрофирмăна килнĕ. Кунта вĕсене валли «парне» хатĕр пулнине ытти чух та пăхкаласа иртсе кайнă пулĕ вĕсем. Çак хуçалăх территорийĕнчи ĕçлемен фермăран «Газель» машина çине хура тимĕр-тăмăр сахал мар тиенĕ вăрăсем. Хуçалăха 5 пин тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ. Çакăн пек «тирпей-илем» кĕртнĕшĕн тĕп хула çыннисен яваплăхне тытмаллах пулать.

Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Срочно продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши площадью 55 кв. м. Тел.: 8-927-992-20-28. 2-3.

Продаю обрезные, необрезные доски от 2 м. до 6 м., штакетник, горбыль. Все в кредит!!! Трубы б/у. Дрова обрезки бенсплатно!!! (На территории «Моргаушрайбыт»). Тел.: 8-905-345-31-09. 7-10.

Продается двухкомнатная квартира в с. Моргауши, 44, 1 кв. м., с хозпостройками. Цена договорная. Тел.: 8-927-992-17-09.

Икĕ çулхи хура-ула тĕслĕ тынашки çухалнă. Хăлхи номерленĕскер. Пĕлекенсене 2-19-03, 68-3-10 телефонсем-пе шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатпăр.

Моргаушскому райпо на постоянную работу требуются грузчики. Обращаться в отдел кадров по тел.: 2-19-40.

Спутниковые антенны Триколор с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 3-3.

Стальные и межкомнатные двери, мебель, пластиковые окна на заказ. Замер, установка и консультация бесплатно. КРЕДИТ. Адрес: с. Моргауши, Дом быта. Тел.: 8-927-841-67-31. 3-3.

Дорого покупаем металлолом. Тел.: 89053415311; 883541-66222. 3-3.

Реализуем: кольца для колодцев ж/б, армированные 0,7м, 1,0 м, 1,5 м. Крышки, днища к ним, столбы ограждения 1,9 м, 2,2 м, фундаментные блоки. Доставка манипулятором. Тел.: 8-902-327-82-52. 12-16.

КАРТЫ ОПЛАТЫ ОПТОМ. (Мегафон, Смартс, Билайн, МТС, ON). Тел.: (8352) 62-81-14, 29-68-68. 6-8.

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения, выдает займы. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 12-20.

Куплю старинные монеты, самовары. Дорого. Тел.: 8-910-388-01-61; 8-960-190-67-34. 7-8.

СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95 . СПУТНИКОВЫЙ ИНТЕРНЕТ. 7–8.

Акция. Компьютеры от 7000 рублей. Только до октября. Подробности - тел.: 21930; 89373717414, WWW.NIX.RU. Есть все. 5-6.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070505:104, местоположение: участок находится примерно в 280 м по направлению на юго-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Ториково, дом 7, площадью 4715 кв.м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Организация реализует отруби по цене 120 руб. за 1 мешок. Принимает на работу продавщиц, поваров, сварщиков. Тел.: 8-927-848-84-30. 1-2.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Зам. гл. редактора В.Л. ШАПОШНИКОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 09.09.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3594.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.